Чăваш Енри АПК ветеранĕсен союзĕн ятарлă кăларăмĕ

Туса илме те, сутма та пĕлмелле

Çак кунсенче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев республикăри АПК ветеранĕсемпе тĕл пулса ял территорине, агропромышленноç комплексне аталантарассипе çивĕч ыйтусем хускатрĕ.

Çĕр ĕçченĕсене – пулăшу

Олег Николаев вĕсене ял хуçалăх отраслĕнчи лару-тăрупа, умри тĕллевсемпе паллаштарчĕ. Кăçал федераци, регион шайĕнче республикăри аграри секторне пилĕк çуллăха аталантарассипе тĕллевсене палăртнă. Сăмахран, пысăк мар кооперативсем йĕркелессине палăрмаллах ансатлатнă. Малашне ялти бизнеса уçмашкăн та çăмăлланĕ. Ял хуçалăх продукцин – экологи тĕлĕшпе паха таварăн – рынокне йĕркелемешкĕн право никĕсне палăртнă. Ку уйрăм пайтаçăсене продукцие вырăнти рынокра кăна мар, ют çĕршывра та сутма май парать.

Агропромышленноç комплексне аталантарассипе тата ял хуçалăх чĕр таварĕн, апат-çимĕçĕн рынокне йĕркелессипе патшалăх программине улшăнусем кĕртнĕ, отрасльти стратегин тĕп енĕсене палăртнă. АПКна цифрăлассипе, кредит явăçтарассипе, машинăпа трактор паркне çĕнетессипе, «Агростартап» программăпа грант илекенсен йышне ўстерессипе, ял хуçалăх продукцине экспортлама условисем тăвассипе тивĕçлĕ мерăсем йышăнĕç.

Республикăра АПК çирĕп аталанса пырать. 2021 çулхи январь-сентябрь уйăхĕсенче теплицăра томат – 8,2 пин /иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 1,9 хут пысăкрах/, хăяр 11,6 пин тонна /1,2 хут нумайрах/ туса илнĕ. Кăçалхи йывăр условисене пăхмасăр республика тырăпа РФ Ял хуçалăх министерствипе тунă килĕшĕве туллин пурнăçланă, 532,9 пин тонна пуçтарса кĕртнĕ.

Хуçалăхсем иртнĕ çулхи çак тапхăртипе танлаштарсан машинăпа трактор паркне 1,5 хут ытларах çĕнетнĕ. 2021 çулта республикăри агропромышленноç комплексне 300 инвестици проектне явăçтарнă /5 млрд тенкĕлĕх/, 350 ĕç вырăнĕ йĕркеленĕ. Кăçал Чăваш Енри АПК 3663 млн тенкĕлĕх патшалăх пулăшăвĕ илнĕ.

2021 çулта федераци тата республика бюджечĕсенчен 29 хресчен-фермер хуçалăхне, 2 ял хуçалăх кооперативне 235 млн тенкĕлĕх грант уйăрнă. Унсăр пуçне «Перспектива» программăпа 13 хресчен-фермер хуçалăхĕ патшалăх пулăшăвне тивĕçнĕ.

Кăçал республикăри ял территорийĕсене аталантарма мĕн пур программăпа 5 млрд тенкĕ уйăрнă. Нухрата социаллă объектсене юсама, çĕнĕрен тума, инженери, инфратытăма аталантарма янă. ЧР Ял хуçалăх министерстви «Чăваш Республикинчи ял территорине комплекслă майпа аталантарасси» патшалăх программине те хута кĕртет. Кăçал 1 пин проекта пурнăçлама 982 млн тенкĕ уйăрма палăртнă.

Хальхи вăхăтра çĕр ĕçченĕсен çивĕч ыйтăвĕ – продукцие тупăшлă вырнаçтарасси.

– Чăваш Республикинчи Апат-çимĕç фончĕ вырăнта туса илнĕ продукципе рынока çул хывассипе тĕп вырăн йышăнмалла, чи малтан фермерсенне, – палăртрĕ Олег Алексеевич.

Вăл каланă тăрăх, умри тĕллевсене пурнăçламашкăн логистика центрне, склад тума тивĕ. Вĕсенче, çав шутра общество апатланăвĕн пункчĕсенче, фермер апат-çимĕçне курттăммăн кăна мар, пĕчĕкшер те туянма май пултăр. Фондăн вара çакна тума условисем çителĕклех. Çулталăк вĕçленичچен документсене пăхса тухса ыйтăва татса памалла.

Предприяти рынокра ырă ят çĕнсе илнĕ ĕнтĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн, туянакансене продукципе вăхăтра тивĕçтернĕшĕн ăна Пĕрлехи реестра та кĕртнĕ. Пĕтĕм Раççейри агропромышленноç комплексĕн «Ылтăн кĕркунне – 2021» куравĕнче фондăн кĕрпи пахалăх тĕлĕшпе малти вырăна йышăнса ылтăн медале тивĕçнĕ. Рынокра хăй вырăнне тупнă предприятие фермерсен ял хуçалăх продукцине тупăшлă вырнаçтарма çăмăлрах пулĕ.

Чăвашçăкăрпродукчĕ иртнĕ çултанпа ĕçĕ-хĕлне çĕнĕлле йĕркеленме тытăннă. Шупашкарти элеваторта тулă çăнăхне авăртмашкăн цеха тĕпрен çĕнетнĕ. Канашри элеватора та юсаççĕ. Унăн хăвачĕ 20% пысăкланнă. Çакă тĕрлĕ продукци хатĕрлесе кăларма май парать. Предприяти ял хуçалăх продукцине туса илекенсемшĕн, çакăр пĕçерекенсемшĕн хака пĕр пек йĕркелесе тăраканни пулĕ. Ўсен-тăран отраслĕнче, чĕр тавара тирпейлессипе, ытти енĕпе вăл пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнĕ.

Ветерансемпе канашланă май Олег Николаев хушма хуçалăхсене пулăшасси пирки те сăмах хускатрĕ. Малашне вĕсене те чĕр тавар туса илнĕ çĕре явăçтармаллине, хуçалăх ĕçĕ-хĕлне тытса пыракансен йышне тата статистикăна кĕртмеллине палăртрĕ. Халлĕхе çак ĕçе йĕркелеменрен отрасльти кăтартусем те тулли мар.

Ял хуçалăх таварне туса илекенсене паракан пулăшăва çĕнетни АПКна, ял территорине аталантарма хавхалантарать.

– Хамăр туса илнине сутма вĕренсен, кооперативсем тата производство площадкине йĕркелесен аталанатпăр. Эпир отрасльти е территоринчи лару-тăрăва лайăх енне улăштарма пултаракан кирек мĕнле пуçарулăха тишкерĕпĕр тата ăна пурнăçа кĕртме пулăшăпăр, – терĕ вăл.

Ял çамрăка илĕрттĕр

– Региона ертсе пынă май кĕске хушăрах пурне те «Пĕрле» девизпа пĕтĕçтерсе АПКна тата республикăн социаллă аталанăвĕшĕн курăмлă ĕç турăр. Ялта пурăнакансем, ветерансем ĕне тытакансене субсидисем парса пулăшнине, ял ипотекин процент ставкине пĕчĕклетнине ырласа йышăнаççĕ, – терĕ Чăваш Енри АПК ветеранĕсен союзĕн председателĕ Александр Самылкин.

Çакă çынсене малашлăха шанма, тăрăшарах вăй хума хавхалантарать. Хисеплĕ ватăсем ĕçлĕ тĕлпулура ырă улшăнусене палăртнипе пĕрлех пăшăрхантаракан ыйтусене те хускатрĕç, вĕсене татса памалли çул-йĕр шырарĕç.

Ялсенче пурăнакансемшĕн хушма хуçалăх – тупăш çăл куçĕ. Ĕнешĕн субсиди уйăрма тытăнни вĕсемшĕн курăмлă пулăшу. Хальхи вăхăтра выльăх апачĕ хатĕрлеме çăмăл мар. Комбикорм хаклă, ăна вара Чăвашçăкăрпродукчĕ те хатĕрлесе кăларма пултарать. Чылай фермер, хушма хуçалăх çĕр ĕçне пурнăçламашкăн техника туянаймасть. Кооперацисем йĕркелени çак енĕпе пысăк пулăшу пулĕ.

Ялта специалистсем çителĕксĕрри АПКна туллин аталанма чăрмав кўрет. Кадрсем хатĕрлессипе вĕренў заведенийĕсем пур темелле. Анчах вĕренсе тухнă çамрăксенчен тăван тăрăха таврăнакан сахал. Ветерансен шухăшĕпе çак ĕçе шкултан тата ашшĕ-амăшĕнчен тытăнмалла, ял хуçалăхĕнчи çĕнĕлĕхсемпе, малашлăхпа паллаштармалла. Агроклассенче вĕрентме хисеплĕ ветерансене те явăçтармалла. Специалистсем хатĕрлессине комплекслă, ытти ведомствăпа пĕрле татса памалла. Ялсенче инженер, агроном, ветеринар çеç-и? Учитель, тухтăр, культура ĕçченĕ тата ытти те кирлĕ.

Республикăра вăрман 30% йышăнать. Юлашки вăхăтра вĕсене час-часах арендăна параççĕ. Çут çанталăк пурлăхĕпе усă куракансем вара ыттисене хаклăрах-па сутаççĕ. Василий Шадриков ветеран усламçăсем вăрманпа мĕнле усă курнине, каснă йывăç вырăнне хунав лартнине тĕрĕслекен çуккине пăшăрханса каларĕ. Хисеплĕ ватта ялта пурăнакансен йышĕ чакни те пăшăрхантарать. Юлашки вăхăтра тўнтерле пулăм вăй илни палăрать: çынсем ĕçлесшĕн мар, патшалăхран пособи, ытти тўлев кĕтсе лараççĕ, пахчинче вара çум курăк ашкăрать. Вăл ял территорине комплекслă майпа аталантарма сĕнчĕ. Такăр çул-йĕр, газ, ФАП пурри кăна çителĕксĕр, ĕçлесе тупăш илмелли майсем туса памалла. Хальхи вăхăтра фермерсен, хушма хуçалăхсен продукцие вырнаçтарма çăмăл мар. Ыйтăва татса пама кооперацисем йĕркелеме сĕнчĕ вăл. Çакă пĕчĕкрех хуçалăхсене техникăпа, вăрлăхпа тивĕçтерме, продукцие сутма пулăшĕ. Малашне кооперацирен агрокомбинат йĕркелеме те пулĕ.

Шупашкар районĕнчи «Ольдеевская» агрофирма Çĕнĕ Шупашкарпа юнашарах темелле. Вăл республикăра малта пыракан предприятисенчен пĕри шутланать. Кунта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетеççĕ, теплица хуçалăхĕ те пур. Шалу вăхăтра, тивĕçлипе тўленине пăхмасăр кадрсем тĕлĕшпе ыйту çивĕч тăрать. Яш-кĕрĕм ял хуçалăхĕнче ĕçлесшĕн мар-мĕн. Агрофирмăн директорĕсен канашĕн председателĕ Евгения Беликова ветеран пĕлтернĕ тăрăх, специалистсем валли коттеджсен поселокĕ туса пама хатĕр, çĕрне те уйăрнă ĕнтĕ. Анчах пултаруллă, нанотехнологипе ĕçлеме пултаракансене ăçтан тупмалла?

Пăрачкав районĕнчи АПК ветеранĕсен организацийĕн председательне Николай Лоскутова ял çыннине таса шывпа тивĕçтересси, инфляци, ял хуçалăх продукцийĕн, çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх хакĕсем ўссе пыни канăç памасть. Тивĕçлĕ канăва тухнисен нумайăшĕн уйăхри пенсийĕ 12-13 пин тенкĕрен иртмест. Ку укçапа мĕнле пурăнмалла? Ялта пĕччен пурăнакан ватăсем те сахал мар. Ырă пуласлăхшăн ĕмĕрĕпе тар тăкнă ветерансене сума суса Чăваш Енре 2022 çула «Ватă çынсен çулталăкĕпе» ирттерме сĕнчĕ.

Куславкка районĕнчи АПК ветеранĕсен организацийĕн председателĕ Нина Иванова тăван ен юхăнса пынине, унччен пысăк тупăш панă хăмла пахчисем пĕтнине, ялсем пушаннине пăшăрханса пĕлтерчĕ. Темиçе çул каялла ку тăрăхра çĕнĕ ФАП тунă, анчах вăл паянхи кун та хупă – медицина ĕçченĕ çук. Вăл та ял хуçалăхне, вĕренĕве, сывлăх сыхлавне, культурăна пĕрле аталантарма сĕнет. Ялсенче ватăсем валли те условисем туса памалла: лавкка, клуб, ФАП ĕçлетĕр. Вĕсене аякка тухса çўреме кансĕр. Тивĕçлĕ канăва тухни килте хупăнса лармаллине пĕлтермест. Пушă вăхăта усăллă ирттерме условисем, ĕç вырăнĕсем пулмасан çамрăксем те яла юлмĕç.

Юлашки çулсенче районсенче фермерсен юхăмĕ вăй илет. Патшалăх пулăшăвĕ, грант пани нумайăшне ял хуçалăхĕнче ĕçлеме хавхалантарать.

– Гранта тивĕçнисенчен бизнес-планпа килĕшўллĕн 5 çул ĕçленĕ хыççăн хуçалăхне хупакан та самай. Хушма хуçалăх шучĕпе 200-300 гектар çĕр акаççĕ-лартаççĕ, анчах ниçта та отчет тăратмаççĕ, налук тўлемеççĕ, – палăртрĕ Канаш районĕнчи АПК ветеранĕсен организацийĕн ертўçи Валерий Долгов.

Чăваш патшалăх аграри университечĕн ветеранĕсен канашĕн членĕ Николай Кириллов та специалистсене ял хуçалăхне явăçтарас ыйтăва çĕклерĕ. Студентсем ялсене кайма хирĕç мар. Анчах унти кичем пурнăç, пушă вăхăта усăллă ирттерме, канма условисем çукки вĕсене сивĕтет. Ял территорине комплекслă майпа аталантарни вара чылай ыйтăва татса пама пулăшĕ.

Ветерансем ялсенче хупăнса ларакан хушма хуçалăхсен çĕрĕсене пусă çаврăнăшне кĕртессине тата ытти ыйтăва çĕклерĕç. Вĕсене манăça кăларманшăн, республика, АПК аталанăвне хутшăнтарнăшăн Чăваш Ен ертўçисене тав турĕç.

Лариса НИКИТИНА.

АПК ветеранĕсем.

Автор сăн ўкерчĕкĕ